# П. ХУСАНКАЙ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

Уç çырупа калаймăн нимĕн,
Уç çырури сăмах кĕске.
Тен, çакăнпах мана асилĕн,
Асилĕн терĕм йĕксĕке.

Пурнап çаплах. Пурнап тумтирсĕр.
Çӳçсем ӳсеççĕ лупас пек.
Тăп-тăр урах: Васлейĕр, Миттăр,
Примерлă каччă пулас тет.

Ку пурнăçра пурте-мĕн проза,
Поэзисем кирлех те мар.
Çта çĕр улми, унта чăн роза
Ярaймĕ нихăçан тымар.

Поэзисĕр кĕпер хываççĕ,
Унсăрăнах кӳлеç çиле.

Халь ыр çынсем сăвă çырмаççĕ,
Эс те ан çырнă пул, Васлей...

Çитет, тăван. Çырма çук урăх.
Кăмăл пулсассăн çырса яр.
Тен, Виктора унта эс курăн —
Салам хăйматлăх Ăрсая.

1929